26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
МАРТ
12
ВЫРСАРНИКУН
51(6546) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔ ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔ ХАÇАЧĔ

Ялти массăллă-политикăллă ĕçе тĕпренех вăйлатмалла

Колхозлă ялшăн халĕ çуракине тĕплĕн хатĕрленсе, ăна кăтартуллăн ирттерессинчен ответлăрах ĕç те çук. Çураки ĕçĕсем 1944 çулхи тырпул ăнăçлăхне, çапла вара, фронтпа çĕршыва — апат-çимĕçсем, промышленноçа чĕр таварсем çителĕклĕ ларса тăрассине татса парассĕ. Колхоз хресченĕсем çакна лайăх ăнланаççĕ. Вĕсем, Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă кун панă приказпа тата Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, куллен-кун çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Колхоз хресченĕсен пĕтĕм ĕçĕнче вĕсем тăван çĕршыва чĕререн юратни, çĕнтерӳ сехетне çывхартас тупăмпа туранни палăрса тăрать.

Çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх пуçланнăранпа республикăри темиçе çĕр колхоз çуракине хатĕрленсе çитрĕç. Колхозлă ялти патриотсем мухтава тивĕçлĕ ĕç — вăрлăх çитмен колхозсене кивçен вăрлăхлăх тырă парса ĕçе пуçарчĕç. Шупашкар районĕнчи «Урожай» колхоз членĕ В. Е. Егоров юлташ вăрлăх çитмен колхоза кăй тырринчен 132 пăт, Комсомольски районĕнчи «Трактор» колхоз председателĕ Иванова юлташ 27 пăт тата ытти темиçе çĕр колхозник вунăшар пăт параççĕ. Колхоз çамрăкĕсем хушшинче тесрыртан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешӳ сарăлса пырать. Республикăри мĕнпур колхозсем çуракине лайăх туса ирттерессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Колхоз хресченĕсем хушшинче патриотла çĕкленӳ пысăк пулни ялти политикăллă-массăллă ĕçе сӳрĕклетмеллине пĕлтермест. Пачах урăхла, партипе комсомол тата совет организацийĕсен, ялти культура учрежденийĕсен мĕнпур опычĕпе пултарулăхне политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатнă çĕре мобилизацилесе, колхозниксен производствăри активлăхне ытларах та ытларах ӳстерсе пымалла тăвас пулать.

Пирĕн политикăллă-массăллă ĕçе организациле лайăх усламсем пур тата опыт та сахал мар. Партипе комсомол организацийĕсем колхозниксем хушшинчи массăллă-ăнлантарулăх ĕçе тивĕçлипе йĕркеленĕ. çĕрте халĕ çуракине хатĕрленесси те ăнăçлăн пырать. Çапла, Элĕк районĕнчи «Доброволец» колхозри пуçламĕш парторганизаци политикăллă-массăллă ĕçе хуçалăхри задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртес шутпа йĕркелесе пырать. Пуçламĕш парторганизаци çумĕнчи агитколлектив колхозниксемпе колхозницăсене тĕнчери лару-тăру çинчен, партипе правительство решенийĕсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса парать. Кунта малта пыракан колхозниксен опытне анлăн сараççĕ. Колхозри агитаторсем производствăра хăйсем пример кăтартаççĕ. Ку колхоз çуракине начар мар хатĕрленнĕ.

Анчах агитациллĕ-массăллă ĕçе пур çĕрте те кирлĕ пек организацилемен-ха. Çĕмĕрле районĕнчи «Большевик» колхозри пуçламĕш парторганизаци тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра колхозниксем хушшинче массăллă ĕçе начар мар йĕркеленĕ пулнă. Юлашки вăхăтра вара вăл çав ĕçе пĕтĕмпех сӳрĕклетсе янă. Бригадăсенче агитаторсем пулмаççĕ, хаçат-журналсем вăхăтра илсе тăмаççĕ, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем йĕркеллĕ тухмаççĕ. Колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе ялăх йĕркелени колхоз ĕçĕнче те çывăччĕн палăрать. Колхоз çуракине ялăх хатĕрленет, вăрлăхсене сортласа пĕтермен, лаша кӳлмелли хатĕрсем çитмеççĕ. Вырăнти удобренисене турттарасси те юлса пырать. Чкаловски тата ытти хăшпĕр МТС-сенчи пуçламĕш парторганизацисем те çавăн пекех массăллă ĕçе йĕркелесси çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ.

Ялти политикăллă-массăллă ĕçе йĕркелес тĕллевĕ пирĕн куллен тимлĕн ĕçлемелле. Чи малтанах, политикăллă-массăллă ĕçе хуçалăх ыйтăвĕсенчен уйăрса, ячĕшĕн кăна туса пырассине пĕтерес пулать. Пире колхозсемпе МТС-сенче çирĕп дисциплина, йĕркелĕх тума шулăшакан агитаци кирлĕ. Партипе комсомол организацийĕсен куллении ĕçĕнче, агитаторсем ирттерекен калаçура, стена хаçачĕсемпе боевой листоксенче çав ыйтусем тĕп вырăнта пулмалла. Политикăллă-массăллă ĕçе мĕнле йĕркеленине хуçалăхри ĕçсене пăхса хакламалла.

Ялти политикăллă-массăллă ĕçĕн центрĕ — вулав çурчĕ пулмалла. Парти организацийĕсен вулав çурчĕсен ĕçне лайăхлатма тăтăклă мерăсем йышăнмалла. Вулав çурчĕсем тавра ялти культурăллă вăя — учительсене, агрономсене, врачсемпе фельдшерсене тата активистсене явăçтармалла. Вулав çурчĕн тивĕçĕ — колхозниксен вĕренĕвне организацилесси, вăйлă тырпулшăн пыракан социализмлă ăмăртăва сарса пырасси пулать. Вулав çурчĕсен малта пыракан колхозниксен опытне анлăн сармалла, ĕçри дезорганизаторсене хирĕç кĕрешмелле.

Политикăллă-массăллă ĕçĕн вăйĕ — ĕçпе агитациленинче пулать. Коммунистсемпе комсомолецсен, активистсен социализмлă ăмăрту организаторĕсем пулса тăмалла. Вĕсен колхозăн пур ĕçĕсенче те пример кăтартса пырса, пĕтĕм колхозниксене хăйсем пек ĕçлеме хавхалантармалла. Çавăнпа пĕрлех вĕсен халăха фронтри хыпарсемпе, фронтовиксен чаплă ĕçĕсемпе паллаштармалла.

Ялта политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организацилени умра тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыма пулăшать. Партипе совет тата комсомол организацийĕсен çакна ялан асра тытмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартан 10-мĕшĕнче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тата унăн контратакисене сире-сире ярса, çапăçлах ТАРНОПОЛЬ хулин урамĕсенче çапăçнă.

ПРОСКУРОВ хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Каменец-Подольск облаçĕнчи КРАСИЛОВ район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса темиçе ял йышăннă. Вăл шутра—ЗАСТАВКИ, ЦИЦЕНЕВКА, ГРИГОРОВКА, СКОВОРОДКИ, МАЛОМОЛЕНЦЫ, СТАВНИЦА, ГОРБАСОВ, ЧАПЛЯ, НОВОКОНСТАНТИНОВ, ОВИЧНА ятлă пысăк ялсем.

КАЗАТИН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, Винница облаçĕнчи район центрне—ХМЕЛЬНИКИ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—СОКОЛОВО, БЕЛЫЙ РУКАВ, СЕРБИНОВКА, КРИВОШЕИНЦЫ, КОЛЫБАБИНЦЫ, ШИРОКАЯ ГРЕБЛЯ, ТОМАШПИЛЬ, КЛЕТИЩЕ, ЗАБИЖЬЕ, ЯНОВ, БАЙКИВКА, ПИСАРИВКА, ГОРДЫЛЕВКА, ТАРАСОВКА ятлă ялсем тата НОВО-КИРИЛЛОВКА, КУРИЛОВКА, УЛАДОВКА, ХОЛОНЕВСКАЯ, ЛЮЛИНЦЫ ятлă чугун çул станцийĕсем.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронтăн çарĕсем, çĕнĕрен наступлени пуçласа ярса, нимĕçсен УМАНЬ енчи вăйлă оборонине татнă та, пилĕк кун хушши наступленилле çапăçусем туса пырса, 40—70 километр малалла куçнă, шăтарса кĕнĕ вырăна фронт тăрăх 175 километра çити сарнă. Çав операцие туса, фронт çарĕсем УМАНЬ хулине, ХРИСТИНОВКА хулипе паха чугун çул узелне, Киев облаçĕнчи ТАЛЬНОЕ, БУКИ, МАНЬКОВКА, БАБАНКА, ЕКАТЕРИНОПОЛЬ ятлă район центрĕсене, Винница облаçĕнчи МОНАСТЫРИЩЕ ятлă район центрне тата халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра—СОКОЛОВКА, КИШЕНЦЫ, ИВАНЬКИ, АНУФРИЕВКА, ЗАЛЕССКОЕ, ГУСАКОВО, ЦИБУЛИВ, ИВАНОВКА, МОЛОДЕЦКОЕ, МАШУРОВ, КОЛОДИСТОЕ, КАПУСТИНО, САРНЫ, ВЕРХНИЧКА, ДМИТРОВСКОЕ, ДОБРОВОДЫ, ВИШНОПОЛЬ, МАЙДАНЕЦКОЕ, ГУЛЯЙПОЛЬ, РОМАНОВКА, ШУКАЙВОДА, РОССОШКИ, КОЧЕРЖИНЦЫ, СУШКОВКА, СКСАНИНО, КАМЕНЕНЬЕ ятлă пысăк ялсем тата ЗВЕНИГОРОДКА, РОССОХОВАТКА, ТАЛЬНОЕ, ШАЛАШЕВСКИЙ, МОШУРОВО, ПОТАШ, ПОДОБНОЕ, ЯРОВАТКА, ШУКАЕВО, СЕВАСТЬЯНОВКА, МОНАСТЫРИЩЕ, КООПЕРАТИВНАЯ, ВАХНЫ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Наступлени туса пырса, УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем нимĕçсен ултă танковăй дивизине, çичĕ пехотнăй дивизине тата пĕр артиллери дивизине йывăр поражени тӳстернĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 20.000 вилли ытла выртса юлнă.

Малтанлăха палăртнă тăрăх, УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—500 ытла (вăл шутра 200 ытла пĕтĕмĕшпех юсавлă «тигр», «пантера» тата «фердинанд» йышши танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем), хир тупписем—600 яхăн, автомашинăсем—12.000 ытла, хĕçпăшал, боеприпас тата ытти çар пурлăхĕн склачĕсем—50 ытла. Нимĕçсен 2.500 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Тыткăна лекнĕ гитлеровецсем каласа кăтартнă тăрăх, çак хатĕрсем нимĕçсен 11, 13, 14, 16, 17-мĕш танковăй дивизийĕсен, СС «Адольф Гитлер» танковăй дивизийĕн пулнă. Ку дивизисене пирĕн наступление чарса лартма хушнă пулнă, анчах та пирĕн çамăллăн куçса çӳрекен соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт пырса çапнипе, нимĕçсен çак танковăй дивизийĕсен личнăй составĕ хăйĕн пĕтĕм вăрçă техникине пăрахса тарнă.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем наступление анаçлăн вăйлатса пынă, Кировоград облаçĕнчи НОВГОРОДКА район центрне, Николаев облаçĕнчи БАШТАНКА район центрне туртса илнĕ тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — БРАТОЛЮБОВКА, ГУРОВКА, ФЕДОРО-ШУЛИЧИНО, НОВАЯ СКЕЛЕВАТКА, СОФИЕВО-ГЕЙКОВКА, НОВО-ГРИГОРЬЕВКА, АЛЕКСАНДРОВКА, НИКОЛАЕВКА, НОВО-ДМИТРОВКА, АНДРЕЕВКА, НОВО-БЕРЕЗОВКА, ХРИСТОФОРОВКА, БАРАТОВКА, НОВО-ПАВЛОВКА, АРХАНГЕЛЬСКОЕ, ПЕТРОПАВЛОВКА, НОВАЯ КАМЕНКА, КОЧКАРОВКА, ДОБРАЯ ятлă пысăк ялсем тата ГЕЙКОВКА, УТЕШНОЕ, КАЗАНКА, ДОБРОВОЛЬСКИЙ, НОВОПОЛТАВКА, ЯВКИНО ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе, каялла чакакан тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухатусем тӳсет.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 9-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 89 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 77 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Тарнополь хулинче пирĕн çарсем тăшманпа урамсенче çапăçнă. Хула гарнизонне пулăшма нимĕçсем хăйсен пысăк вăйĕсене куçарса пынă та хаяррăн хирĕç тăраççĕ. Совет пехотинецĕсемпе танкисчĕсем, гитлеровецсенчен урам хыççăн урам тасатса, тăшмана çынсемпе техника енчен питĕ пысăк çухатусем кӳнĕ.

* * *

Проскуров хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, малалла хăвăрт куçса пырса, Каменец-Подольск облаçĕнчи Красилов район центрне туртса илнĕ. Тепĕр участокра совет боецĕсем тăшманăн пĕр группировкине çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă. Çав группировка эсэсовецсен «Лангемарк» ятлă бригадин подразделенийĕсенчен тăнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 1490 вилли выртса юлнă. 6 танк, 15 бронетранспортер тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Казатин хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем Винница облаçĕнчи район центрне Хмельники хулине туртса илнĕ тата халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă. Кун каçичченхи çапăçусенче нимĕçсен пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 17 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине персе çунтарса янă е сиенленĕ. Нимĕçсенчен 19 тупă, 22 миномет тата боеприпас, апат-çимĕç, горючи хунă 9 склада тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем, çĕнĕрен наступлени пуçласа ярса, нимĕçсен оборонине анлă фронт сарлакăшĕпе татнă та тăшманăн Уманьпе Христиновка районĕнче ултă танковăй, çичĕ пехотнăй тата пĕр артиллери дивизийĕнчен тăракан группировкине аркатса тăкнă. Тыткăна лекнĕ гитлеровецсем каланă тăрăх, совет çарĕсен наступленийĕ начар çанталăкпа шыв-шур вăхăтĕнче пуçланса кайнă, ку наступлени нимĕçсем пачах та кĕтмен пулнă. Пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем нимĕçсен артиллерипе минометсен батарейĕсене нумайĕшне пусарса лартнă, тăшмана питĕ пысăк çухатусем кӳнĕ. Аса-çисĕм пек вут-çулăм тăкнă хыççăн пирĕн танкистсемпе пехотинецсем тапранса кайнă, вĕсем тăшман пехотине лӳчĕркесе тăкнă. Нимĕçсен командованийĕ, пирĕн татса кĕнĕ çарсен наступленине чарма хăтланса, хăйĕн танковăй дивизийĕсене çапăçăва кĕртсе янă. Пирĕн çарсем Горный Тикич шывĕ хĕрринче тăшманăн иккĕмĕш оборона линине çĕмĕрсе тăкнă та, тăшмана хирĕç çапăçăва кĕрсе кайса, нимĕçсен танковăй группине çĕмĕрсе тăкнă. Çĕмĕрсе тăкнă нимĕç дивизийĕсен юлашкийĕсем, хăйсен пĕтĕм вăрçă техникине пăрахса, кăнтăр-хĕвеланăçнелле, Умань хули патнелле тарнă. Нимĕçсем мĕн тери пысăк поражени тӳснине пирĕн çарсем çав тери нумай трофейсем тытса илнинчен лайăх курма пулать. Горный Тикич шывĕнчен пуçласа Умань хули патне çитиччен нимĕçсем пăрахса хăварнă хĕçпăшал, снаряжени тата тĕрлĕрен çар пурлăхĕ купаланса выртать. Пур çулсем те тăшманăн танксемпе, хăй тĕллĕн çӳрекен туписемпе, бронетранспортерсемпе тата унăн автомашинисемпе пуçса ларнă. Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе ефрейторĕсем çав çапăçусенче питĕ пысăк паттăрлăхпа хастарлăх кăтартнă. Сулăйĕрсем йăлтах пăсăлса кайнă тата хирсенче пусса ларманни пысăк тăнă. Çав условисенче совет пехоти уйрăм енсенче тăшманпа çапăçса кунсерен 20 километр таран малалла куçса пынă. Тăшманăн çĕмĕрсе тăкнă чаçĕсене хăвала-са пырса, пирĕн çарсем Умань хулине вăркăнса кĕрсе кайнă. Гитлеровецсем, хăйсен вăйĕсем тӧмĕн чухнех пĕтмелле пулин те, Умань хулине хăйсен аллинче тытса тăма тăрăшнă. Çапла майпа вĕсем хăйсен çĕмĕрсе тăкнă дивизийĕсене йĕркене кĕртме вăхăт тупасшăн пулнă. Умань хули урамĕсенче хаяррăн çапăçса, пирĕн танкистсемпе пехотинецсем нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Умань хулине туртса илнĕ. Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем çавăн пекех тата Христиновка хулипе паха чугун çул узелне туртса илнĕ тата темиçе район центрне, чугун çул станцине тата халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăннă.

* * *

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă. Кировоград облаçĕнчи Новгородка район центрне, Николаев облаçĕнчи Баштанка район центрне тытса илнĕ, халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă. Пĕр соединени чаçĕсем халăх пурăнакан темиçе пунктри тăшман гарнизонĕсене çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă. Тулли мар даннăйсем тăрăх, 2000 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 87 тупă, 4000 винтовкăпа автомат, 200 автомашина ытла, 60 трактор тата çар хатĕрĕсем тиенĕ 300 лав тытса илнĕ. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна нумай илнĕ.

* * *

Финн заливĕнче тăшманăн 500-шер тонна таякан икĕ тральщикне шыва путарнă.

Паттăр земляка мухтав!

Совет Союзĕн Геройĕ Михаил Сапожников

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1944 çулхи февралĕн 4-мĕшĕнче йышăннă Указ тăрăх, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн, çав вăхăтра паттăрлăхпа геройлăх кăтартнăшăн пирĕн паттăр земляка, хăюллă летчике, гвардин кĕçĕн лейтенантне Михаил Александрович САПОЖНИКОВ юлташа, ЛЕНИН орденĕпе «ЫЛТТĂН ÇАЛТĂР» медаль парса, СОВЕТ СОЮЗ ГЕРОЙĔН ятне панă.

М. А. Сапожников юлташ Шупашкар хулинче, 1920 çулта çуралнă. Вăрçă пуçланнăранпах фронтра. Совет Союз Геройĕн ятне паричченех правительство ăна ХĔРЛĔ ЯЛАВ тата ХĔРЛĔ ÇАЛТĂР орденĕсемпе наградăланă пулнă.

Хамăрăн паттăр земляка — чыс та мухтав!

Артелĕн хăшпĕр производствисене пĕтĕçтермелле

МУРКАШ, мартăн 11-мĕшĕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Ермакри «Партин XVIII-мĕш съезчĕ» промысла артельне 1930 çулта организациленĕ. Унтанпа артель ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем сахал мар туса кăларнă. Иртнĕ çулта 419.000 тенкĕллĕх продукци кăларса, çулталăкри производство планне 166 процент пурнăçланă.

Артель кăçал та начар мар ĕçлет. Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă уяв умĕнхи ăмăртура январьпе февраль уйăхĕсенчи плансене ытлашшипех тултарчĕ. Уйрăмах тир тăвас ĕç ăнăçлă пырать. Тир тăвакансем А. Силов, П. Кушников тата Г. Орлов юлташсем 3—4 хут тухăçлăрах ĕçлеççĕ.

Атă-пушмак çĕлекенсем лайăх ĕçленине те палăртмалла. Хлебниковпа Горшков юлташсем атă-пушмаксене çĕнĕрен лайăх çĕлеççĕ, киввисене те тĕплĕн юсаççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем ку ĕçе çамрăксене вĕрентеççĕ. Унсăр пуçне аластаçсем сывăхри колхозсене ут таврашĕсем юсаса парса çуракине хатĕрленме пулăшаççĕ.

Артель хăйĕн производствине анлăлатсах пырать. Кăçал çăмата йăвалакан цех организациленĕ. Унта 3 мастер, 3 вĕренекен ĕçлеççĕ. Колесниковпа Пушков мастерсем хăйсен ĕçĕнче пултарулăхпа пуçарулăх кăтарса пыраççĕ.

Анчах артель ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Иртнĕ çулти плана, пĕтĕмĕшпе илсен, ирттерсе тултарнă пулин те, кирпĕчпе савăт-сапасем планпа палăртнă чухлĕ туса кăларайман. Кирпĕчпе савăт-сапасем тăвас ĕç юлса пыни мастерсем çитменнинчен килет. Çавна шута илсе, артелĕн çак ăсталăхпа ĕçлекен рабочисене халех хатĕрлемелле.

Артель ĕçне кая хăваракан тепĕр çитменлĕх вăл — хăшпĕр цехсем пĕр-пĕринчен аякра вырнаçни. Сăмахран, çĕвĕ çĕлекен цехсем — вицĕ ялта. Анаткас Маркари (Ишлей районĕ) çĕвĕçсем артельтен 15 çухрăм кăарра пурăнаççĕ. Çакă вăл производствăна ертсе пырас ĕçсене йывăрлатать тата аластаçсем хушшинче агитациллĕ массăллă ĕçсене туса пыма чăрмантарать.

Асăннă çитменлĕхсене халех пĕтермелле, мĕншĕн тесен хăшпĕр производствăсене пĕтĕçтерни тата агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатни продукци ытларах туса кăларма пулăшнă пулĕччĕ.

Т. ИВАНОВ.

Кварталти финанс планне тултарнă

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Нăрваш Шăхальпе Каншел ялсовечĕсем 1944 çулхи пĕрремĕш кварталти финанс планне срокчен тултарнă. Ку ялсовечĕсенче укçа-тенкĕ пухас енĕпе агитаторсем тата ялти актив тăрăшса ĕçлеççĕ.

Анчах та хăшпĕр ялсовечĕсем укçа-тенкĕ пухас енĕпе начар ĕçлеççĕ-ха. Липовка ялсовечĕ (ялсовет председателĕ Кириллов, финагент Васильев) пĕрремĕш квартал планне 26 процент кăна пурнăçланă. Çавăн пекех Кубня, Шăлач ялсовечĕсем те çак ĕçре юлса пыраççĕ.

В. ДАВЫДОВ.

Украина ССР-ĕн Верховный Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Украина ССР-ĕн Верховный Совечĕ совет çĕрне нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларса пыракан хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара чунтан-чĕререн тав тăвать.

Нимĕç захватчикĕсемпе çапăçма, Украина çĕрне нимĕç оккупанчĕсенчен ăнăçлăн ирĕке кăларса пыма тата Совет Украинин нимĕç захватчикĕсем ишĕлтернĕ халăх хуçалăхне ура çине тăратма украина халăхне пулăшнăшăн Украина ССР-ĕн Верховный Совечĕ аслă вырăс халăхне, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсене, Совет Союзĕн правительствине, большевиксен партине тата халăхсен аслă çулпуçне Сталин юлташа чунтан-чĕререн тав тăвать.

УССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. ГРЕЧУХА.

УССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. МЕЖЕРИН.

1944 çулхи мартăн 4-мĕшĕ. Киев хули.

Украина ССР-ĕн Верховный Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Украина ССР-ĕн Верховный Совечĕ, «Украина çĕрне нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларасси çинчен тата Совет Украинин халăх хуçалăхне ура çине тăратас задачăсем çинчен» УССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ Н. С. Хрущев юлташ тунă доклада илсе, УССР правительствин ĕçĕсемпе политикине ырлать.

УССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. ГРЕЧУХА.

УССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. МЕЖЕРИН.

1944 çулхи мартан 4-мĕшĕ. Киев хули.

Пур заказсене те вăхăтра пурнăçламалла

ЙĔПРЕÇ. (Телефонпа). Вăрманпромхозăн план тăрăх промышленноçăн пĕр отраçлĕ валли апрелĕн 1-мĕшĕччен 1500 кубометр йывăç хатĕрлесе памалла, паянхи куна планран ирттерсе 200 кубометр хатĕрлесе турттарнă. Çак задание пурнăçланă çĕрте Çĕрпӳ районĕнчи колхозсем аван ĕçлерĕç. «Ĕмĕт», «Молот», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем çак енĕпе задание 150 процент ытла пурнăçларĕç.

«Коммунар» колхоз, вăрман хатĕрлевĕн пур заданийĕсене те срокчен пурнăçласа, мартăн 15-мĕшĕ тĕлне Донбасс валли 500 кубометр йывăç хатĕрлесе пама пулчĕ.

Анчах та çав вăхăтрах Йĕпреç районĕ чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттарас ĕçре юлса пырать. Планпа вăрманта çуран 275 çын, лашапа 481 çын ĕçлемелле пулсан, паянхи куна çуран 65 çын, лашапа 87 çын кăна ĕçлет. Вутă хатĕрлесе турттарас плана мартăн 15-мĕшĕ тĕлне пурнăçлас тесе, çак районăн вăрмана кирлĕ чухлĕ лашасемпе çынсем ямалла.

П. ФЕДОРОВ,
Вăрманпромхоз директорĕ.

Уйăхри задание 139,6 процент пурнăçланă

Шупашкарти эрех завочĕн коллективĕ çĕнĕ çулăн пуçламĕшĕнче производство заданине кашни уйăхрах срокчен тултарса пыма обязательство илнĕччĕ. Рабочисемпе работникăсем, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ. Февраль уйăхĕнчи задание завод коллективĕ срокчен, 139,6 процент пурнăçларĕ.

Халĕ кунта ĕçлекенсем март уйăхĕнчи плана 8 кун малтан пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомĕ, вырăнти промышленность предприятийĕсемпе топливо промышленноçĕн предприятийĕсен тата промысла кооперацийĕн артелĕсем хушшинчи социализмлă ăмăртăвăн 1944 çулхи февраль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çапла палăртнă:

ВЫРĂНТИ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ:

Тăвай райпромкомбиначĕ (управляющийĕ Игнатьев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Широв юлташ) пĕтĕм продукци туса кăлармалли 1944 çулхи февраль уйăхĕнчи государство заданине 164,7 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли задание 191,4 процент пурнăçланă.

Совнарком, ăмăртура Тăвай райпромкомбиначĕ çĕнтернĕ тесе йышăнса, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне унăн аллинчех хăвармалла тунă. Ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 15 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Куславкино райпромкомбинатне (управляющийĕ Лукьянов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Кругликов юлташ) ăмăртура палăрнă чи лайăх работниксене премилеме 10 пин тенкĕ, Пăрачкав райпромкомбинатне (управляющийĕ Серапионов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Белоглазов юлташ) 5 пин тенкĕ укçа памалла тунă.

Совнарком февраль уйăхĕнче Элĕк, Вăрнар, Ишлей, Куславкка, Октябрьски, Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Вăрмар, Чкаловски, Шăхасан, Етĕрне тата Елчĕк райпромкомбиначĕсем аван ĕçленине палăртнă.

Çавăн пекех Чăваш АССР Совнаркомĕ февраль уйăхĕнче Йĕпреç, Калинино, Комсомольски, Красноармейски, Первомайски, Советски, Çĕрпӳ, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Шупашкар райпромкомбиначĕсем начар ĕçленине палăртнă.

ВЫРĂНТИ ТОПЛИВО ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ:

Вырăнти топливăна хатĕрлесе турттарас енĕпе 1944 çулхи февраль уйăхĕнчи социализмлă ăмăртура Елчĕк тата Çĕрпӳ районĕсенчи вăрманпромхозсем мала тухнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Елчĕк районĕнчи вăрманпромхоза (директорĕ Тимофеев юлташ) памалла туса, ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 20 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Çĕрпӳ вăрманпромхозне ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 10 пин тенкĕ укçа памалла тунă.

Совнарком февраль уйăхĕнче вырăнти пушăсене тивĕçтерме вутă хатĕрлесе турттарас енĕпе Йĕпреç, Куславкка, Комсомольски, Кӳкеç, Октябрьски, Пăрачкав, Сĕнтĕр, Вăрмар, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Чкаловски, Улатăр, Канаш вăрманпромхозĕсем начар ĕçленине палăртнă.

ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕМ ЕНĔПЕ:

Октябрьски районри Караньялĕнчи «Труд» артель (правлени председателĕ Мокеев, райсовет исполкомĕн председателĕ Херсонов юлташсем) февраль уйăхĕнче пĕтĕм продукци кăлармалли плана 139,4 процент, куллен кирлĕ таварсем кăлармалли задание 193,5 процент пурнăçланă. 1944 çулхи январь уйăхĕпе танлаштарсан, февраль уйăхĕнче продукци туса кăларассине 94,6 пин тенкĕлĕх ӳстернĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне унăн аллинчех хăварса, ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 15 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Улатăр районĕнчи «Заря» артеле (правлени председателĕ Федоров юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Повереннов юлташ) 10 пин тенкĕ, Шупашкарти «Металлист» артеле (правлени председателĕ Тимошкин юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ), Первомайски районри Липовкăри Ленин ячĕпе тăракан артеле (артель председателĕ Шилин юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Васильков юлташ) 5-шер пин тенкĕ укçан премия памалла тунă.

Çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх

Ÿнерчĕк сиче: Вăрмар районĕнчи Чубайри «Дружба» колхозăн чи лайăх бонгадирĕ А. Кируш юлташ.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Вăрлăх парса пулăшаççĕ

ШĂХАСАН, мартăн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем Шăмăршă районĕнчи колхозсене 500 центнер вăрлăхлăх тырă пачĕç. Вăл шутран «Победа» колхоз 100 центнер, «Красный Октябрь» колхоз 75 центнер, Молотов ячĕпе тăракан, «Березовка», «Активист» колхозсем 40—60-шар центнер вăрлăх парса пулăшрĕç.

Çавăн пекех районри çĕрулми вăрлăхĕ çитмен колхозсене колхозниксем хăйсен çĕрулмине кивçен параççĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхозра 11 колхозник 21 центнер, «Чуваш ЦИК» колхозра 7 колхозник 8,5 центнер çĕрулми панă.

П. ПЕТРОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

28 колхоз çуракине хатĕрленсе çитрĕ

КÿКЕÇ. (Телефонпа). Районри колхозсенче хĕрÿ ĕç пырать. Вăрлăхсене сортлаççĕ, вĕсен шăтас пахалăхне тĕрĕслеттереççĕ. Тимĕрçсем лаççисенче кашни кун ĕç вĕресе тăрать, ака-суха туммалли хатĕрсене юсаççĕ, çĕнĕрен тăваççĕ.

Заводской, Соляновски, Шăмăш ялсоветĕсене кĕрекен пур колхозсем те çуракине тухма хатĕрленсе çитнĕ. Шăмăш ялсоветĕнче (председателĕ Демьянов юлташ) 5 колхоз. Вĕсем пурте вăрлăх çителĕклĕ хатĕрленĕ тата вĕсене сортласа хунă. 5 колхозран пĕринче çĕрулми вăрлăхĕ çитмен. Ытти колхозсем çак колхоза кирлĕ таранах вăрлăхлăх çĕрулми панă.

Мартăн 10-мĕшĕ тĕлне районри 28 колхоз çуракине тухма тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ.

М. ШИЛЬДЯКОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Шкул ачисем колхоза пулăшаççĕ

ИШЛЕЙ. «Самолет» колхозра пионерсемпе шкул ачисем вырăнти удобренисем пухас тĕлĕшпе тимлĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Иван Ердуковпа Леонид Бычков вĕренекенсем пĕр кун хушшинчех 40 пăт таран кĕл пухаççĕ. Çавăн пекех шкул ачисем 50 пăта яхăн кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

А. СМИРНОВ.

Вырăнти советсен çуракине хатĕрленес ĕçе тимлĕн ертсе пымалла

Пирĕн республика 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене кăтартуллăн иртерессишĕн Мари тата Морзва республикисемпе социализмлă ăмăртăва тухрĕ. Колхозниксемпе колхозницăсене тăванла республикăсен ăмăртăвĕнче мала тухассишĕн кĕрешме мобилизацилесси—вырăнти советсен чылай ĕçĕ пулса тăрать. Вĕсемшĕн халĕхи вăхăтра колхозсене çуракине хатĕрлесе çитересс ĕç пек ответлă ĕç урăх çук та.

Çĕрпÿ районĕнчи ялсоветсен çуракине хатĕрленсе иртермелли ĕç планĕсем пур. Нĕрĕш ялсоветĕ (председателĕ Лукин юлташ), хăйĕн территорине кĕрекен колхозсенче çуракине хатĕрленессине мĕнле пыни çинчен колхоз председателĕсен отчечĕсене итлесе, кăтартусем панă. Вăл хушнă ĕçсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслет. «Красный Октябрь», «Малалла» колхозсем çуракине пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитнĕ. «Красный герой» колхоз (председателĕ Отечественнăй вăрçă инвалидĕ коммунист Данилов юлташ) районра малта пыракан колхозсенчен пĕри. Вăл акмалли вăрлăхсене 100 процентпех хатĕрлесе хунă, 10 процентран страхфонд тунă. Ялхуçалăх машинисене январь уйăхĕнчех тĕплĕн юсаса лартнă. Ĕçе юрăхлă кашни лаша валли хăмăт-ĕнерчĕксем çителĕклĕ таран хатĕрленĕ. Çураки вăхăтĕнче çитерме кашни лаша валли пĕрер лав утă, пĕрер центнер сĕлĕ уйăрса хунă. Кунсăр пуçне, халĕхи вăхăтра лашасене кунсерен 1,5 килограмм сĕлĕ, çителĕклĕ таран утă параççĕ. Хĕллехи вăхăтра тумалли агротехника ĕçĕсене пурне те пурнăçа кĕртнĕ.

Анчах ялсоветне кĕрекен «Боец» колхоз ку таранах çитсе те çуракине хатĕрленессине çинчен тĕплĕн шухăшламан. Вăрлăх çитмест. Лашасене çитерме апат çителĕксĕр. Колхозра конюхсене вĕçĕмсĕр улăштараççĕ. Çавна пула 48 лашаран 12-шĕ питех те вăйсăр, 3 лаша вилнĕ.

Колхозниксем хушшинче ĕç дисциплини начар. Колхоз председателĕ Архипов юлташ ялсоветĕ хушнă ĕçсене пурнăçа кĕртмест. Колхоз пурлăхне çирĕплетессишĕн тăрăшмасть. Вăхăта ĕçкĕре сÿресе иртерет. Ялсоветĕн ку колхоза хăлех пулăшмалла.

Райсовет исполкомĕсем чылайĕшĕ хăйсен ларăвĕсенче колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен ыйтусем тăтăшах лартма пуçларĕç. Анчах çак ответлă ыйтăва сÿтсе-явнă чухне ялсовет председателĕсене ларăва чĕнмеççĕ. Вĕсем вара райсовет исполкомĕ мĕнле решени йышăннине пĕлмесĕрех юлаççĕ. Çакă вăл Елчĕк, Пăрачкав, Вăрмар, Çĕмĕрле, Элĕк тата ытти райсовет исполкомĕсен ĕçĕсенче хытă сисĕнет.

Элĕк районĕнчи Шарпыкă ялсоветĕ (председателĕ Хамурова юлташ) колхозсене çуракине хатĕрленес ĕçре кирлĕ таран ертсе пымасть. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра вăрлăха юрăхлă кондицие çитермен. Лашасем валли çураки вăхăтĕнче çитерме уйăрса хунă сĕлле халех расходлаççĕ. Лаша кÿлмелли хатĕрсем çитмеççĕ, 5 лаша пуçне пĕр хăмăт çеç тивет. Лашасене кÿлмо пăрас пулсан, хăмăт-ĕнерчĕксене килĕрен шыраса тупмалла, мĕншĕн тесен вĕсене уйрăм колхозниксене салатса панă. Çавăн пекех урапа-сунасем, плугсемпе сÿресем те уйрăм колхозниксем патĕнче лараççĕ. Кун çинчен ялсоветĕ те, райçĕрĕç пайĕ те пĕлеççĕ, анчах çак йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме тăрăшмаççĕ.

Пирĕн республикăри колхозсем çуракине хатĕрленес ĕçре кулленкун çĕнĕ çитĕнÿсем туса пыраççĕ. Анчах эпир, малта пыракан колхозсем çине пăхса, ĕç ăнăçлă пырать-ха тесе лăпланса ларма пултараймастпăр. Пирĕн кая юлса пыракан колхозсем те пур-ха. Вĕсене манса хăварни калама çук сиенлĕ ĕç пулса тăрать. Вырăнти советсем пур колхозсене те çуракине тĕплĕн хатĕрлесе çитерме тивĕçлĕ.

Ялсоветĕсем çуракине хатĕрленес ĕçе лайăх ертсе пычăр тесен, вĕсене райисполкомсем сичен кулленех пулăшу парса тăмалла

П. ИВАНОВ.

Ÿнерчĕк çинче: Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри паллă стахановка Н. Викторова юлташ.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Çирĕп те вăйлă лашасемшĕн

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (Телефонпа). Çураки ăнăçлăхне колхозсен лашисем çирĕп ÿт-пÿллĕ, сывă та вăйлă пулни татса парать. Çакна пирĕн районри чылай колхозсенче лайăх ăнланса илнĕ.

Çуракине хатĕрленсе çитмелли уйăхлăха хутшăнса, ĕçсыннин депутачĕсен Комсомольски райсоветĕн исполкомĕ колхозсенче лашасене пăхас ĕç мĕнле тăнине тĕрĕслесе тухрĕ. Начарланнă лашасене пахăртса, вĕсене кантарма тăрсма хушнă, лашасене чир-чĕртен сыватас тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăннă.

Унтанпа икĕ эрне иртрĕ ĕнтĕ. Лашасене пăхас ĕçе районри колхозсем палăрмаллах лайăхлатрĕç. Чылай колхозсенчи лашасен сывлăхĕ халĕ юсанса пыни курăнать.

Выльăх-чĕрлĕх апатне тирпейсĕр тăкаланине пула, «Янга-Турмыш» колхозра лашасем питех те пачарланса çитнĕччĕ. Колхоз активĕ çакна вăхăтра асăрхарĕ. Лашасене сыватас тĕлĕшпе хăвăрт мерăсем йышăннă. Колхоза кÿршĕри колхозсем кивçен фураж панă. Колхоз конюхĕсем лашасене йĕркеллĕн пăхма тытăнчĕç, вĕсене тăтăшах илетнĕ улăма тураса пăтратса параççĕ, вăхăтра шăвараççĕ, тасатса тăраççĕ.

«Çĕнтерÿ» колхозра чылай лашасем кĕçĕллĕ пулнă. Çак чиртен хăтăлма колхоза районри организацисем пулăшу пачĕç. Райçĕрĕç пайĕ колхоза хăйĕн ветврачне ячĕ. Вăл пулăшнипе колхозăн лаша фермине ясах йĕрке тунă, лашасене кĕçĕ чирĕнчен сыватас тесе кашни конюх тăрăшса ĕçлет. Кĕçĕ чирĕпе кĕрешмелли майсене вырăнтах тупрĕç. Çакăнпа пĕрлех чиртен сыватасси лашасене тăрантарас ĕçе лайăхлатнинчен те нумай килчĕ.

Паянхи куна çапла «Çĕнтерÿ» колхоз хăйĕн лашисене кĕçĕ чирĕнчен йăлтах сыватса çитерчĕ. Малашне те конюхсем лашасене лайăх пăхса пырсан, «Çĕнтерÿ» колхоз çуракине вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек хăвăрт та ăнăçлăн туса ирттерĕ.

А. ПОТАПОВА,
Райçĕрĕç пайĕн старши зоотехникĕ.

Çитменлĕхсем чылай-ха

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Иртнĕ кунсенче кунта ялхуçалăхĕнче малта пыракансен тата партипе совет активĕн слечĕ пулса иртрĕ. Слетра 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсем тата колхозсемпе МТС умĕнче кăçал тăракан задачăсем çинчен ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Н. Григорьев юлташ доклад туса пачĕ.

Красноармейски районра халиччен начар тырă туса илнĕ колхозсемех 1943 çулта тырпул тухăçлăхне чылай ÿстерчĕç. Хусаккасси ялсоветĕнчи «Комбайн» колхоз, акă, фронт ыйтнă пек ĕçлесе, 1943 çулта [illegible] тухăçлă тырпул туса илчĕ

Докладчик тырпул тухăçлăхне ÿстерессишĕн çителĕксĕр кĕрешнĕ колхозсен руководителĕсене хытă критиклерĕ тата кăçал çуракине хатĕрленес ĕç чылай колхозсенче çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕ. Район çураки валли вăрлăх тасатса хатĕрлес ĕçре кая юлса пырать. Вăрлăх пур колхозсенче те акма кирлĕ чухлĕ уйăрса хунă пулсан та, ăна тасатас, кондицие лартас ĕç кая юлнă. Паянхи куна мĕн пурĕ те 13.724 центнер вăрлăха çеç триерсемпе сортланă. Çавăн пекех ялхуçалăх машинисене юсас ĕç те юлса пыни курăнать. Çуракинче мĕн пурĕ 100 сеялкăпа усă курмалла, анчах халĕ 50 сеялкăна çеç юсаса лартнă.

Чылай колхозсенче лашасене çураки тĕлне мăнтăрлатассишĕн тивĕçлипе тăрăшни курăнмасть. Апатсене пĕçерсе çитерес ĕçе районри 96 колхозран 32-шĕнче çеç, йÿçĕтсе çитерес ĕçе—17 колхозра çеç туса пыраççĕ.

Слет районри колхозсенче клевер, кантăр, çĕрулми вăрлăхĕсем çителĕклĕ маррине палăртрĕ. Çуркунне акма клевер вăрлăхĕ 135 центнер кирлĕ пулсан, халĕ мĕн пурĕ те 39 центнер çеç пур. Слет клевер вăрлăхне çитес кунсенчех çапса шĕкĕлчеме, ăна тĕплĕн тасатса акмалли кондицие лартма хушса хăварчĕ. Çавăн пекех вăрлăхлăх çĕрулми хатĕрлес тĕлĕшпе апат-çимĕçе каякан çĕрулми тăррине касса юлас ĕçе организацилеме хушрĕ. Слет Çĕрпÿ районĕнчи колхозсене социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ.

С. ШАДИН.

„МАРС“ КОЛХОЗРА

— Акă ĕнтĕ пирĕн колхозăн хирне кĕтĕмĕр, — терĕ манăн лавçă Минулла апай.

Вăл хăйĕн тăлăпĕн сивĕпе пасарнă сухавине юртан тасатрĕ те яш сын пек тÿрленсе ларчĕ. Çул тăршшĕпех чĕнмесĕр, хутран-ситрен çеç сăмах хушса пынăскерĕн, хăйсен тăван колхозĕн хирне кĕрсенех чĕлхи уçăлчĕ, мана вăл колхоз хирĕпе, çыннисемпе тата ял [illegible] пурнăçĕпе паллаштарма пуçларĕ.

Эпĕ те хире йĕри-тавра пăхса çаврăнтăм. Аслă Пăла çывăхĕнчи хирсем тÿрĕ те тип-тикĕс, юр таран хĕвĕсе илнĕ.

— Çак хирте ĕçлесе ваттăлтăм эпĕ, анчах хирте кăçалхи пек юр выртнине сахал астăватăп. Апла пулсан та эпир кăçал 361 гектар çине юр тытса хăвартăмăр—юрăн хакне лайăх пĕлетпĕр ĕнтĕ...

Малтан эпĕ Минулла апая калаçма юратман çын тесе шутланăччĕ. Çул çинче вăл, эпĕ унăн колхозĕ çинчен темиçе хутчен те сăмах хускатрăм пулсан та, пуплĕн калаçа памарĕпе пĕрех: «Çитсен хăвăрах курăр-ха» тесе çеç хучĕ. Халĕ вара кăмăлĕ уçăлмаллипех уçăлчĕ унăн. Ыйтмасăрах, колхоз вăрçă вăхăтĕнчи висçĕмĕш çуракине тахçанах хатĕрленсе çитни çинчен те тĕплĕн каласа пачĕ.

Калаçа-калаçа сисмен те эпир: униче хапхинчен те кĕрсе кайнă. Аслă урамăн икĕ енĕпе — колхозниксен çĕнĕ çуртĕсем, тирпейлĕ картишсемпе хуралтăсем. Катаранах капăрланса лараççĕ колхоз витисем, тырпул амбарĕсем, машинăсем хумалли сарайсем, ытти хуралтăсем. Вĕсем колхозлă яла илем кÿреççĕ.

— Çак çĕнĕ суртсемпе хуралтăсене йăлтах юлашки вун-вуникĕ çул хушшинче, ялта колхоз организациленĕ хыççăн туса лартнă, — каласа парать Минулла апай.

—Гаязов ĕçлеме тытăннă хыççăн ĕнтĕ...

— Çапла, Гаязов ĕçленĕ хушăра çав.

Калаçу çакăнта татăлчĕ: эпир колхоз правленийĕ умне çитсе чарăнтăмăр.

Тăван çĕршыва фашистла нимĕç вăрăхурахĕсенчен хÿтĕлесе хăварма Сăръел хăйĕн сывă та вăй-питти çыннисене вăрçă хирне ăсатнă. Колхозри мĕнпур ĕçсене йĕркеллĕ те вăхăтра туса пырас шанчăк йăлтах ватăсемпе хĕрарăмсем çинче, уйрăмах колхоз председателĕ—ватă коммунист Абдул Гаязович Гаязов çинче юлнă.

Юратнă çулпуçăмăр Сталин юлташ радиопа чĕнсе каланă хыççăнах Абдул Гаязов колхозри пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăчĕ хушнă пек урăхлатса йĕркеленĕ. Вăл чи малтанах уйĕç бригадисене, звеносене тĕрекнетнĕ, ĕçе ватăсемпе ачалла хĕрарăмсене те анлăн явăçтармалли майсем тунă. Ĕç дисциплинине çирĕплетнĕ. Колхозра ĕç вăйĕ çитменни çинчен калаçнине те илтеймĕн.

Абдул Гаязова пур ĕçре те актив вăйлăн пулăшса тăрать. Абдул Гаязовичăн унăн заместителĕ Феттах Салахеев часчасах ватăсене пухса канашлаççĕ. Вĕсем яланах колхозниксемпе пĕрле: кункаçа кашни бригадăрах пулма ĕлкĕреççĕ. фермăна кайса килеççĕ, выльăх витисенче пулаççĕ. Кăçхине вара Гаязов хăйĕн чи çывăх юлташĕсемпе — Феттах Салахеевпа, фронтран аманса таврăннă Килн Гимальдиновпа, Шарафулла Бикмеевпа тата Закарья Сабирзяновпа пĕрле бригадирсене пухса ĕç кунĕн итогĕсене тăваççĕ, ыран валли ĕç параççĕ. Пĕр-пĕр бригада юларах пыма тытăнсан, вĕсем унăн сăлтавне çийĕнчех тĕпчесе пĕлеççĕ.

Абдул Гаязович колхозниксемпе чĕререн калаçать, нихăçан та хыттăн кăшкăрса е хăратса калаçмасть. Вăл ĕç çинчен çеç мар, килти пурнăç çинчен те, ача-пăчасем çинчен те — пĕтĕмпех ыйтса пĕлме тăрăшать, вара хăйĕн шухăшне пĕлтерет, канаш парать.

Çыннăн чĕрине тĕрĕс ăнланнăшăн, ырă кăмăллă пулнăшăн, тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн юратаççĕ ăна колхозниксемпе колхозницăсем. Председатель калани — колхозниксемшĕн закон. Çавăнпа председателĕн кашни сăмахне пурнăça кĕртме тăрăшаççĕ.

Абдул Гаязович Гаязов ертсе пынипе. «Марс» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем вăрçă кунĕсенче хăйсен ятне республикăра татах та чапа кăларчĕç. Хĕрлĕ Çар фондне тырă парас ĕçе Сăръелсем пуçарнă, вĕсем танксен колоннисем тума укçа хывнăшăн юратнă çулпуçăмăртан Сталин юлташран салам илме тивĕçлĕ пулчĕç. Çулран-çул тырпул тухăçлăхне ÿстерсе пычĕç, фронта пулăшассине вăйлатрĕç.

Сăръел ялсоветне Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне панă. Ялсоветĕнче пĕр «Марс» колхоз анчах. Çак ялава илессишĕн ялсоветĕнче ĕçлекенсемпе пĕрле Абдул Гаязов та, ялсоветĕн ытти депутачĕсем те çине тăрса ĕçленĕ.

—Ялсоветĕ государство умĕнчи парăмсене срокчен пурнăçа кĕртсе пырать. Сăмахран, 1943 çулта государствăна çăмарта памалли плана—июль уйăхĕнче, сĕт памалли плана — август уйăхĕнче, аш-какай памалли плана — сентябрь уйăхĕнче, тырă памалли плана — октябрь уйăхĕнче пурнăçа кĕртнĕ. Çак парăмсене колхоз кăна мар, колхозниксем те срокчен парса татнă. Çак ĕçре парторганизаци секретарĕ Гаязов юлташ, комсомол организацийĕн секретарĕ Сабирзянов юлташ, ялсоветĕн депутачĕ Гимранова юлташ уйрăмах тăрăшса ĕçлерĕç,—тесе каласа парать пире ялсовет исполкомĕн председателĕ Гарифуллин юлташ.

«Марс» колхоз членĕсем иртнĕ çул тухăçлă тырпул туса илчĕç. Государствăна тырă срокчен парса татнă хыççăн кооперацирен урлă татах 12.000 пăт ытлашши сутрĕç. Колхоз председателĕ Абдул Гаязович Гаязов, иртнĕ çул танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 105.000 тенкĕ укçа панăскер, кăçал каллех тепĕр пысăк патриотла ĕç турĕ. Тăван çĕршывăн [illegible] патриочĕ государствăна 178 пăт тĕштырă сутрĕ.

Кăçалхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме кунти колхозниксемпе колхозницăсем тырпулсене хиртен пуçтарса кĕртнĕ хыççăнах тытăннă. Халĕ ĕнтĕ çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ. Райçĕрĕç пайĕ панă план тăрăх, колхозăн кăçал иртнĕ çулхинчен 90 гектара яхăн ытларах тырă акса хăвармалла. Вăрлăха икĕ хутчен тасатса, шăтас пахалăхне тĕрĕсленĕ, ăна таса та типĕ амбарсенче усраççĕ. Кунсăр пуçне вăрлăх çитмен пĕр колхоза 30 гектар çине акмалăх сĕлĕ вăрлăхĕ уйăрса параççĕ.

Колхозăн ĕçчен тимĕрçи Ильясов мĕн хĕле кĕнĕренпех тимĕрçĕ лаççинчен тухма пĕлмест. Вăл хăйне пулăшаканĕпе пĕрле икĕ касăллă 40 плуг, 8 сеялка, транспорт инвентарĕсем юсарĕ, урапасене шинăларĕ. Плугсемпе сеялкăсене тата сÿресене сарайне тирпейлесе лартнă.

Колхозниксем тырпула çулсеренех сеялкăсемпе акса хăварнă, кăçал та çаплах тăваççĕ. Халĕ сеяльщиксене те палăртса хунă ĕнтĕ. Сеяльщиксем пулса кăçал Усман Саметов, Азизян Рахимзянов, Гельзиган Камалов, Бурган [illegible] ĕçлемелле.

Колхозăн ĕç лашисем—120. Лашасене хĕлĕпех ĕçрен уйăрман пулин те, вĕсем вăтам ÿт-тирлĕ. Выльăх апачĕ тата лашасене çитермелли фураж та ытлашшипех. Лашасене кунта старши конюх коммунист Сибай Галиев, конюхсем Минулла Галиев, Иметь Аскаров питех те тăрăшса пăхаççĕ. Вĕсен лашисем пурте самăр. Галие Гимранова та—колхозăн ветсанитарĕ фермăсенчен тухма пĕлмест. Вăл ĕçлеме пуçланăранпа колхозра выльăх-чĕрлĕх вилменпе пĕрех

Кунти колхозниксемпе колхозницăсем тырпул тухăçлăхне ÿстерес ĕçре мĕнпур майсемпе усă кураççĕ. Хĕле кĕнĕренпе уя 8.285 лав тислĕк кăларса купаланă. Çапла вара плана икĕ хута яхăн тултарнă. 62 центнер кĕл, 68 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Иртнĕ кĕркунне 550 гектар кĕрхи çĕртме туса хăварнă. Çаксем йăлтах тăпрари пÿре ытларах упраса хăварма май параççĕ, тухăçлă тырпул туса илесси шантараççĕ.

Колхоз халь çуракине прттермелли плана тума тытăннă. Çурхи тырăсене 9 кун хушшинче акса пĕтерме палăртнă. Агитколлектив (ертсе пыраканĕ—вулав çурчĕн заведующийĕ Сабирзянов) агитациллĕ-массăллă ĕçе ăнăçлăн туса пырать. Халĕ агитаторсем колхозниксене Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ те чаплă çĕнтерĕвĕсем çинчен ăнлантарса параççĕ.

Ку колхозăн чаплă руководителĕ Абдул Гаязов фронтовиксен çемйисемшĕн тăванла тăрăшать. Çарти çынсен арăмĕсене, ачи-пăчисене кирлĕ вăхăтра тырпул, вутă тата укçа-тенкĕ парса пулăшаççĕ. Çак патриот çинчен фронтра та ырă хыпар сÿрет.

Абдул Гаязов фронтран кашни кун тенĕ пекех çырусем илсе тăрать. Ун патне тăван колхозăн çыннисем çеç мар, палламан çынсем те ăшă кăмăллă çырусем яраççĕ. Гаязов юлташ пире гварди лейтенанчĕн Ревкат Сунгатуллинăн тата Казахстан çыннин—Нуртдин Аземхановăн çырăвĕсене вулаттарчĕ. «Хаклă колхозниксемпе колхозницăсем,—тесе çырать Ревкат Сунгатуллин фронтран,—эпĕ Хĕрлĕ Çар агитаторĕн 34-мĕш номерлĕ блок-нотĕнче тăван колхоз председателĕ Абдул Гаязович Гаязов государствăна хăй ирĕкĕпе 178 пăт тырă сутни çинчен пĕлтĕм. Эпĕ çав хыпара пĕлсен, ун çинчен фронтри юлташсене каласа патăм. Пытармастăп, эпĕ тăван колхозăн руководителĕпе мухтантăм.

Фронтра пире ăшă тумлантараççĕ, тутă çитереççĕ. Висĕ çул хушши яхăн фронтра пулса, эпир апат-çимĕç тата тумтир çитменнине пачах туймастпăр. Çакăнта сирĕн ĕç те яр-уççăн курăнса тăрать, тăван колхозниксем.

Халĕ эпир вăрçă вăхăтĕнчи çураки умĕнче тăратăр. Эсир çуракине кăтартуллăн иртересс пĕр иккĕленмесĕр шанса тăратăп».

Абдул Гаязов çамрăк мар ĕнтĕ, аллă сула сывхарнă. Анчах вăл, хăйĕн сывлăхĕ начаррине пăхмасăрах, ырми-канми ĕçлет, фронта вăйлăн пулăшса тăрать.

Левой килсенех, эпир каçа хирĕçех сула кайма тухрăмăр. Абдул Гаязов пире ăсатрĕ те выльăх-чĕрлĕх ферминелле çул тытрĕ.

Левой каланă тăрăх, Абдул Гаязов унта тăтăшах пулать иккен. Мĕншĕн тесен халĕ ĕнесемпе сурăхсем пăрулама, сыснасем çăварлама пуçланă. Паянхи кун тĕлне 17 ĕне, 50 сурăх пăрулама. Çамрăк выльăхсем пĕри те вилмен. Акă мĕншĕн çÿрет унта колхоз председателĕ Абдул Гаязов

П. НИКОЛАЕВ,
(Хамăр корр.).

Елчĕк районĕ. Сăръелĕнчи «Марс» колхоз.

Ют çĕршывсенче

Черчилль Итали флочĕ çинчен калани

ЛОНДОН, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англин премьер-министрĕ Черчилль паян общинăсен палатинче Итали флочĕн кунçулĕ çинчен сăмах тухса каланă. Общинăсен палатин членĕсем палатăн çывăх вăхăтра пулмалли ларăвĕсенче сÿтсе-явма икĕ ыйту тăратрĕç,—тенĕ Черчилль.—Çав ыйтусем васкавлă ыйтусем пулнă пирки, эпĕ вĕсем çине паянах ответ пама шут тытрăм.

«Президент Рузвельт каларĕ ĕнтĕ,—тенĕ Черчилль,—Итали флочĕпе малашне мĕнле усă курасси çинчен тата вăл камăн пуласси çинчен калаçнă. Уйрăмăн илсе кăтартсан, Совет Союзĕн тинĕс-сар флотне Англипе Америкăн е Италин хăшпĕр карапĕсене парса халех тĕреклетме кирли çинчен калаçнă. Çав калаçусем çинчен эпĕ халь çапла çеç калама пултаратăп: Италин тинĕс-çар влаçĕсемпе тунă килĕшĕве халь улăштарма шутламастпăр. Çав килĕшÿ тăрăх, Итали карапĕсемпе вĕсен командисем халь ăçта тăраççĕ, çавăнта тăшмана хирĕç çапăçмалла. Тăшманăн е тăшман пулнă çĕршывăн флочĕпе мĕн тăвасси пирки Германие хирĕç тата Японие хирĕç пыракан вăрçă пĕтсен калаçса татăлсан лайăхрах пулать пулмалла. Ун чухне тăшмана çĕнтернĕ союзниксем пĕтĕм лару-тăрăва пăхса тухма пултарĕç, ун чухне вара тĕрĕс те тĕрĕслĕхлĕ решени йышăнма май пулĕ»

Турци хаçачĕсем Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи çыхăнусем çинчен мĕн çыраççĕ

СТАМБУЛ, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Турцири хаçатсем Финляндипе перемири тăвас тĕлĕшпе Совет Союзĕ тăратнă условисем çинчен чылай çыраççĕ. Журналистсенчен нумайĕшĕ Совет Союзĕн требованийĕсем пысăк маррине палăртса параççĕ.

Зекария Сертель хăйĕн «Тан» хаçатра пичетленĕ статьинче çакна кăтартса парать: Совет Союзĕн сĕнĕвĕсенче Финляндин никама пăхăнманлăхĕпе суверенитетне тивекен пĕр пункт та çук. Мускав Финляндие пĕр сăмахсăр парăнма, Финлянди çарне ниçта кусарасăр пĕр вырăнта тытса тăма, Финлянди флотне Совет Союзне пама тата Финлянди правительствин членĕсене наказани пама хушман. «Росси финсене вăрçăран чылăн тухма май парать», — тесе çырать Сертель. Анчах Финляндин халĕхи правительстви «Совет Союзĕпе вăрçасси çинчен питĕ васкаса решени йышăнчĕ, вăрçма пăрахма вара пĕртте васкамасть». Çавăнпа вăл Финляндие мир тума нумай чăрмантарĕ, тет Сертель.

Çав хаçатах хăйĕн умстатьинче çапла çырать: Финлянди правительстви Совет Союзĕпе калаçассине юри кая хăварса пырать. «Тан» хаçат шухăшĕпе, Финлянди правительстви Мускавран перемири условийĕсем çинчен нимĕçсем ирĕк панипе ыйтнă, Финлянди правительстви çав условисем питĕ йывăр пулĕç тесе шанса кĕтсе тăнă. «Нимĕçсем финн халăхне тата Германин ытти союзникĕсене ытларах хистеме май тупас тесе çеç çавăн пек тума ирĕк панă, — тесе çырать хаçат. — Анчах та Мускавăн аслă та нумай мала куракан политики çав плансене пĕтĕмпех аркатарса ячĕ»

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: пур фронтсенче те патрульсем кĕрешнĕ.

Мартăн 9-мĕшĕнче вăтам бомбардировщиксем тăшманăн чылай объекчĕсене тапăннă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ кун каçа 900 вĕçеве яхăн тунă.

ЛЬВОВ ХУЛИНЧЕ ГИТЛЕР ГУБЕРНАТОРĔН ЗАМЕСТИТЕЛЬНЕ ТАТА НИМĔÇСЕН АСЛĂ ЧИНОВНИКНЕ ВĔЛЕРНĔ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Афтонтидининген» хаçачĕ Цюрих хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Цюрих хулинче çакăн пек хыпар илнĕ: мартăн 5-мĕшĕнче кăнтăрла Львов хули урамĕнче Гитлерăн Львов хулинчи губернаторĕн заместительне Бауэра тата нимĕçсен пĕр аслă чиновникне Шнейдера вĕлернĕ. Кам вĕлернине пĕлмеççĕ.

ГЕРМАНИЕ ТАВРĂНМАСТЬ

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: нимĕçсен информаци агентствин Турцири уйрăмĕн руководителĕ—Паулюс Германие таврăнма килĕшмен. Паулюс Турцире хăйĕн ĕçĕсене туса тăма пăрахнă. Çавăн хыççăн ăна Германие таврăнма хушнă пулнă. Паулюс, Турцире юлса, политикăллă эмигрантсен правипе усă курса пурăнма шутлать. (ТАСС).

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 6-мĕшĕнче «Мэродер» йышши 300 бомбардировщика яхăн Бельги чиккиҫывăхĕнчи чугун çул складĕсене, Парижран 35 миля çурçĕртерехри аэродромсене тата Па-де-Кале çыранĕнчи çар объекчĕсене тапăннă, бомбардировщиксене истребительсем хÿтĕлесе пынă. Бомбăсем тÿрех чугун çул составĕсене, депона тата ытти çуртсене пырса тивни паллă пулнă. Вăйлă пушарсем тухнă. Халь пĕлсе çитнĕ тăрăх, Берлин хулине мартăн 6-мĕшĕнче кăнтăрла тапăннă чухне нимĕçсен 176 самолетне персе тăкнă. Американецсен 79 самолет пĕтнĕ.

Мартăн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен йывăр бомбардировщикĕсем Трапари чугун çул объекчĕсене (Парижран 24 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) хаяррăн тапăннă.

ЛОНДОН, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: мартăн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Марсель çывăхĕнчи Мариньянри авиаци заводне тапăннă. «Москито» йышши самолетсем Хĕвеланăç Германири тĕрлĕ обьектсем çине бомбăсем пăрахнă.

Мартăн 9-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Англи самолечĕсен пысăк мар соединенийĕсем тăшманăн Çурçĕр Франциири çар объекчĕсене апакăланă.

Союзниксен Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: мартăн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Крит утравĕнчен çурçĕртерехре тăшман карапне вут тивертсе янă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, мартăн 10-мĕшĕ (ТАСС). Югославирен илнĕ хыпарсем тăрăх, фронтăн Приедор—Любля—Сански Мост участокĕнче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Гитлеровецсем татти-сыпписĕр пулăшу илсе тăраççĕ. Çапах та халăх ирĕкĕ кăларассишĕн çапăçакан çар чаçĕсем, ăнăçлă контратакăсем туса тăшман хĕснине сире-сире яраççĕ, гитлеровецсене пысăк сухатусем кÿреççĕ. Ĕнер пулса иртнĕ çапăçусем хыççăн гитлеровецсене малтанхи позицисем çине хăваласа янă.

Черногорире Подгорица участокĕнче, Цетиньепе Данилов Град хушшинчи чугун çула тытса илесшĕн пулса, гитлеровецсемпе четниксен пысăк вăйĕсем çапăçу пуçласа янă. Тăшман малтанах Чево пунктне тытса илнĕ, анчах та икĕ кун хушши пынă хаяр çапăçусем хыççăн нимĕçсене ку пунктран сирпĕтсе кăларнă.

Пĕлтерÿ

Ыран, мартăн 13-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашская урам, 6) агитколлективсен руководителĕсем тата докладчиксемпе беседчиксем валли инструктивлă доклад пулать. Доклад теми: «Мартăн 18-мĕшĕ—Париж Коммунипе МОПР кунĕ».

Докладчик — ВКП(б) горкомĕн лекторĕ Лебедев юлташ.

ВКП(б) горкомĕн партнабинечĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Опытлă лесхоза ОРС-ра ĕçлеме сутупле ĕçне пĕлекен бухгалтерсем тата счетоводсем кирлĕ.
Çак адреспа кийĕсе пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ново-Поперечная, 4. Тел. 7-11

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—91 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00369 Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 эк.